25-61 С-8 С-96

# САМАРТИ ЂĂВАШ ШКУЛĔ

уçăлни виçĕ çул çитнине асăнса, вăл мĕнђле пуçланни çинђеӊ, ун пурăнăçĕ çинђеӊ тата унта вĕрентекеӊсем-пе веренекеӊсем çинђен—Самар кĕпĕрнинђи ђăваш халăхне кĕскеӊ калани.

## Самар хулинђе ђăвашсеӊ валли 2-мĕш сып шкул уçăлни виçĕ çул ситрĕ.

1922 çулта, çулах вăл шкула уçас шухăша тытса, темиçе тĕлте. темиçе хутђеӊ ăнлантара-ăнлантара, тавлаша-тавлаша, тăрăшса ĕç тухмасан та ăна пăрахмасăр — йăлашкинђен Самар Губисполкомне çитрĕмĕр. Кунта вара, самана тем тĕрлĕ йăвăр пулсан та (унђух выçлăх иртейменђĕ-ха)—Самар кĕпĕрнинђи ђăвашсеӊ валли 2 мĕш сып шкул кирлĕ терĕç.

Вара ноябрь уйăхĕнђе, ђăваш йалĕсене пĕлтерсеӊ ђăваш хресђеӊ ађисем Самара пухăна пуçларĕç, Декабрь уйăхиӊ 1-мĕш кунĕ 30 ађа пухăнђĕç, шкул уçăлђĕ.

Тăçтан-тăçтан айакран пухăнна ађасене йут сĕрте-хулара пурăнма ăшă хватер те кирлĕ, выртса тăма выран кирлĕ, апат çимĕç те кирлĕ, тумтирĕ те, урана тăхăнмалли те кирлĕ (вĕсем ђухăн çин ађисем, йе тăлăхсем çатăк-çатăк тумтирпе çăпатапа килђĕç). Çавсемпе нумай расхут кăларасран, çав выçлăх-йăвăр

çул шкул уçма ђасах памарĕç-те. Унтан тата кĕнеке, хут тавраш, партăсем сĕтелђсем ытти шкула кирлĕ йапаласем темђул кирлĕ. Мĕн пурне тупса çитерес пулаť.

**Ним çук çĕртеђ-çапах, ђилай пысăк асаппа Самарта ђăваш шкулĕ пулса тăђĕ.**

Пирвайхи çул Хусан урамĕнђе 69 мĕш çуртра вырнаçкаларăмăр, унтах ађа сем валли общежити турăмăр, çуркунне унтан куçса Ленинград урамĕнђе икĕ çурт йышăнтăмăр № 4 тепри № 34. Кĕркунне (23-мĕш çул)—выçлăх хыççăн Самарта тăлăх ађасеђ çурђĕсем пушана пуçласан № 4 вырăнне Галактионов урамĕнђе 21-мĕш çурта йышăнтăмăр. 1924-мĕш çул, декабрь уйăхĕђте татах урăх çурта куçрăмăр,—ĕлĕк духовная семинария пулнă çурта. Ку тем тĕрлĕ пысăк çуртра пурăнăç питех лата киљмерĕ. Унта тата ытти шкулсем те пуртĕ, мĕђ пур йапаласем хутшăнса карĕç, ађасем пĕр килĕштерей-месђĕç, еретлĕ пурăнăç тума йăвăр ђĕ. Шухăшлаттăмăрђе—аван пулĕђĕ ку çурта пĕтĕмпех ђăваш шкулĕ валли иљсеђ тесе. Анђах ăна шăнăçтарма 300—400 ађа кирлĕђĕ,--пирĕђ 110—120 йахăн анђах. 400 ађа йахăне тăрантарма Губнароб средствă тă пама пултарас çук ђĕ: халăхран та, вăл выçлăх хыççăн ураланиђеђ пулăшу ыйтма май çукђĕ. Вăл пысăк çуртра, ытти шкулсемпе хутшăнса кайса, пирĕђ шкул совçемех пĕтсе ан лартăр тесе (ун пек пирĕђ совпартшкола сӳнсе ларнине аван астăватпар)

пĕҫĕкрех пулиҫте ҫăвашăн хăй ҫурҫĕ пултăр тесе урăх ҫурт шыра пуҫларăмăр, ҫула вара (1925 ҫул) хаљ пурнакан—Хресҫеҫ урамĕнҫи 77-мĕш ҫурта куҫрăмăр. Виҫĕ ҫул хушшинҫе-пĕҫĕккĕҫ-пĕҫĕккĕнех пирĕҫ шкул ҫилай уралан ҫĕ, шкулра, общежитиҫте кирлĕ йапаласем майĕ майĕпе пурте пухăнаҫҫĕ. Хаљ тата (ку ҫурт ҫумне) Оренбург урамĕнҫе 6-мĕш ҫуртне илтĕмĕр, хăй вăйĕпе-хăй апаҫĕпе пурнакан аҫасем валли.

### Ҫăваш шкулĕҫҫе мĕн вĕрентеҫҫĕ.

Пилĕк ҫул хушшинҫе, йалти шкулсенҫе вĕренсе тухнисене илљсе, ак ҫаксене вĕрентеҫҫе:

1. Вырăсла ҫĕљхе. 2. Математика (арифметика, алгебра, геометрия, тригонометрия). 3. Физика. 4. Химия. 5. Естествоведение. 6. География. 7. Обществоведение.

Кăсенҫеҫ пуҫне-кĕснерни-вырсарни кунсенҫе, ытти кунсенҫе—каҫхине тĕрлĕ кружоксенҫе вĕрентеҫҫе; вăл кружоксем: политическисем-виҫҫĕ, сельско-хозяйственный, хоровой, музыкальный, спортивный пĕрер, драматический-иккĕ.

### Ҫăваш шкулĕнҫе кам ĕҫлет, кам вĕрентет.

1. Соловьев Иван Васильевич—Заведывающий школой, вăлах Губнаробра Ҫăваш секци Заведуюшийе.
2. Алдаров Георгий Константинович—Замест. Зав. школой, вăлах Комсод Председателĕ.

3. Воловац Григорий Моисеевич — Заведыв. хозяйством.
4. Стоянов Яков Абрамович—Секретарь и счетовод.
5. Самагин Андрей Васильевич—верентекен.
6. Карандаева Харитина Иустиновна »
7. Михеев Василий Архипович »
8. Кедров Николай Михайлович »
9. Лучков Сергей Трофимович »
10. Иванов Георгий Иванович »
11. Ефимов Иван Алексеевич »
12. Гайваровский Алек-др Владимир. »
13. Тертышная Лидия Ивановна »
14. Трофимова Екатерина Григорьев. »
15. Сятрайкин Александр Осипович - Пионерсен вожакĕ.
16. Беляева Прасковья Алексеезна—Библиотекарь.

Иртнĕ çул сенђе еçленисем: Сальенский (Завхоз) Владимиров, Кузьмин, Карташев, Хованская, Стекольщиков—вĕрентекеңсем.

### Ђăваш шкулĕнђе кам вĕренет.

Каçал вĕренекеңсем пурĕ - 145, вĕсенђең 102 арçнн, 43 хĕр. Группăсенђе: 1)—34; 2)—31; 3)—32; 4)—22; 5)—26, Уездсенђең: Бугурусланран—74; Бузулукран—21; Мелекессрең—12; Самартан—25; (вĕсенђең-хуларан—8); ытти кĕпĕрнерең—13.

145 вĕренекең ађаран шкул вăйĕпе пурнакан 100 çин, хăй вăйепе пурнакан—32, хулара

пурнакансенђеҥ киљсе вĕренекенсем—13; 145 вĕ ренекеҥрен 76 пионер, 51 комсомолец пионерсеҥ хăйсеҥ отряђĕ пур. Комсомолец сеҥ ячейки пур. Комсомол ячейкинђе—18 ђлен, 33 кандидат, арçин-ађă 38, хĕр-ађа 13.

Ячейкăн халђхи Бюронђĕ ĕçлекенђсем: Моисеев, Данилов, Сятрайкин, Андреев, Коновалова, тата Савдеров (техсекретарь).

Комсомол ячейки комсомолăн йалти ячейкисемпе связь тытса тăма пит тăрашат, çиру сем, кĕнеке-хаçат сем вăй çитнĕ таран йаркалат, йалсенђи пур ячейкăсеҥ хăйсеҥ пурнăçĕ çинђеҥ çирса пĕлтерме тăрăшмалла.

Шкул пуçланнăранпа ике выпуск пулђĕ.

1924 çул—14-еҥ тухрĕç вĕсем малалла вĕ ренме аслă шкула пурте пекех вырнаçрĕç:

1. Клавдиева—Москов. Межев. Институт.
2. Лучкова—Москов. Коммун. Унив. востока.
3. Снеговская— Нижегород. Педагог. Инстит.
4. Матвеева—Педфак Саратов. Университ.
5. Иванова—Педфак Саратов. Увиверс.
6. Толстов » çавăнтах »
7. Снеговская О.—Астрахан. Медиц. Инстит.
8. Николаева » çавăнтах » »
9. Дмитриев—Омский Ветеринар. Инстит.
10. Сальенский—Нижегород. Педагог Инстит.
11. Дмитриева—Казанск. Педагог. Инстит.
12. Захарова—Ульяновск. Чув. с/х. Техник.
13. Липатова— } учителе карĕç.
14. Самагина— }

1925 çул—11-ĕҥ тухрĕç. Вĕсĕнђеҥ малалла вĕренђме аслă шкулсене карĕç:

1. Морозов—Ленинград. Пед. Инст. Герцена.
2. Анисимов—Ленинград. Политехн. Инстит.
3. Стекольщиков » çавăнтах » »
4. Цыпленкон—Саратовск. с/х. Инстит.
5. Саврюкова—Саратовск. Ветерин. Инстит.
6. Васильева—Самарский с/х. Институт.
7. Кондратьев » çавăнтах »
8. Липутатов » çавăнтах »
9. Тимофеев—Пермский Медицин. Факультет.
10. Трофимова— } уҫителĕ карĕç.
11. Иголкина— }

Тата хăшĕ шкулран вĕренсе тухмасăр, кĕçĕн группасенҫен техникумсене, ытти шкулсене куçаççĕ.

Веренекенҫсем, хăйсем хушшинҫе йĕрке тытса тăма ученический комитет суйлаççе «13» çинран. Ученический Комитет хăй ҫленĕсенҫеӊ тĕрлĕ комиççисем суйлать, вĕсем: административная, контрольно-хозяйственная, культурно-просветительная, санитарная тата товарищеский суд.

Комиççисеӊ председателĕ сем учком президиумне кĕреççĕ.

Йулашки суйлавра суйлана учкомра çаксем ĕслеççĕ: Ердохин, Александров, Осокина, Чечебейкин, Захаров, Егоров, Старшинова, Дмитриева, Миронов, Данилова, Коновалова, Сятрайкин.

### Ҫăваш йалĕсем айакра пулсан та.

Самарти ҫăваш шкулĕ вĕсемпе связь тытма тăрăшать. Çав ĕçе йĕркене кўртсĕ тăма ҫăваш

шкулĕнҫех комиссия по связи с деревней пур. Вăл комиҫҫи йалсене ҫирусем ҫират, лерен те килҫкелҫет, киле каникула кайакан аҫасене йалта ĕҫлеме ĕҫ парса йарат, йалтан килекенҫесене (ҫăвашсене) тĕрлĕ канаш парат, ăҫта кирлĕ ҫĕре кăтартса йарат, йе пĕрер ҫленĕ йĕртсе кайат, вырăсла пĕлҫменнисенҫе калаҫма пулăшат, йалсене ҫăвашла кĕнекесем, хаҫатсем, тĕрлĕ пĕлҫтерӳ сем, обращенисем салатат; йалсенҫен малашне ытларах ҫиру ҫирма кирлĕ.

Тата ҫăваш шкулĕнҫех кăҫалтампа русско-чувашская литературно-переводческая комиссия пур. Вăл тĕрлĕ ҫирăва вырăсларан ҫăвашла куҫарса ҫират, халҫтерех куҫарнă йапаласем: Самар кĕпĕрнинҫе кооператси мĕнле ĕҫлени ҫинҫен, унтан сельсоветсене, волисполкомсене мĕнле суйласси ҫинҫен, Самар губисполкомĕ ĕслени ҫинҫен.

Йалсенҫе камăн хăй ҫирнă, йе куҫарнă кĕнекесем пулсан-ҫав комиссине йама кирлĕ, вăл майа килҫсен кунтах ҫапе, йе Шупашкара йарĕ. Кам кĕнеке тавраш аван куҫарма пултаракан хăйсем ҫинҫен пĕлтерес пулат, вĕсем комиссине пулăшса тăрсан ĕҫ малалла кайĕ.

Тата йалсенҫе кĕнекесене, хаҫат,-шурналсене сарма тăрăшас пулат.

### Самарти ҫăваш шкулĕ мĕн вăйпа тăрат.

Самар Губисполкомĕ ăна уйăхра парса тăрат: шкулра ĕсҫекенсене--верентекенсене 842 тенкĕ, ҫавсемшĕнех страховой взносшĕн 84 тенкĕ, местком валли 16 тенкĕ, канцелярии

вали 1 тенке те 25 пус, хуçайствăн вак расхутне 40 тенкĕ, аçасене тăрантма—100 çинна—750 тенкĕ, аçасене тумлантарма 51 тенкĕ пурĕ 1784 тенкĕ те 25 пус.

Вутăшăн, шывшăн, электричество çути-шĕнĕ Губнароб тӳлеҫ,

Тата шкула пулăшса тăма Самарти çăвашсем комитет содействия суйлана. Комсод пекарня уçалнаранпа (1915 çул апрель уйăхĕнçенĕ пуçласа) çилай пулăшаҫ: уйăха 150—200 тенкĕ таранçенĕ. Малашне йăлсенçе хресçенсем выçлăх хыççăн уралана пуçласан çав Комсод урлă кĕпĕрнере хамăрăн пĕртенĕ-пĕр 2-мĕш сыпăклă шкула пулăшма кирлĕ, вара пирĕнĕ шкул татах тĕреклĕленĕ, çăваш халăхне малалла вĕренме, çуталла тухма пулăшĕ.

**Сывă пултăр Самар кĕпĕрнинçи çăвашсенĕ шкуле!**

Сывă пултăр вак халăхсене çуталла кăларма тăрăшакан Совет влаçĕ!

Сывă пултăр совет влаçне çул кăтартса пыракан Рассейри Коммунистсен Партийĕ.

Самар кĕпĕрнинçи хăлăха çутта кăларакан пайăн çăваш секци-пе çăваш шкулĕн

заведующийĕ **И. Соловьев.**

1925 мĕш çул декабĕрĕнĕ 1 мĕш кунĕ.

Гублит № 3925, 11 декабря 1925 г. Тираж 1000 экз.

Самара, тип. № 1 им. т. Мяги «Полиграфпрома» уг. Венцека и Галактионов.